25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
НОЯБРЬ
24
ЫТЛАРИКУН
273 (6208) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем пире пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме чĕнеççĕ

Нумай уйăх хушши оборонăллă хаяр çапăçусем туса тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине чылаях хавшатнă хыççăн, Сталинград фронтĕнчи пирĕн войскăсем гитлерла захватчиксен оборона линине çĕмĕрсе кĕрсе наступлени пуçласа ячĕç. Виçĕ кун хушшинче пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар, тăшманăн дивизийĕсене аркатса, 60—70 километр малалла куçнă. Гитлерла тискер кайăксен пусмăрĕнчен нумай ялсене, хуласене ирĕке кăларнă. Хĕрлĕ Çарăн наступленийĕ малалла пырать.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен геройла çапăçăвĕ, пирĕн тăван боецсемпе командирсен паттăрлăхĕ пĕтĕм совет халăхне тылра çĕнĕрен пысăк вăйпа ĕçлеме хавхалантарать, колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсемпе трактористкăсене ялхуçалăхĕнчи пысăк çитĕнӳсем тума чĕнет.

Халĕ пирĕн республикăри колхозсенче авăн çапса пĕтерессишĕн тата государствăна тырă парса татассишĕн фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăх пырать. Нумай районсем, çĕршер колхозсем çирĕмкунлăхра кăтартуллăн ĕçлеççĕ. Вăрнар районĕнчи 44 колхозран 35-мĕш çирĕмкунлăхăн малтанхи вунă кунĕ хушшинче государствăна памалли тырра пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пунктĕсене леçсе панă, государство умĕнчи парăмсене татнă. Вунă кун хушшинче Вăрнар районĕнчи колхозсем 2.400 гектар çинчи тырра çапнă, государствăна 750 тонна тырă леçсе панă, натуроплата тыррине пур колхозсем те пĕтĕмĕшпех тӳленĕ. Сĕнтĕр районĕнчи 39 колхоз тырпулсене çапса пуçтарнă. Районри ытти 63 колхоз фронтри пек ĕçлемелли çирĕм кунлăха активлăн хутшănса, авăн çапас тĕлĕшпе вунă кун графикне ăнăçлăн пурнăçланă. Çак фактсем фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăх пуçланнăранпа республикăри колхозсенче авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсем чылай вăйланса пынине кăтартса пăраççĕ. Вуншар та çĕршер колхозниксем, колхозницăсем колхоз производствинче лайăххрах ĕçлеме тытăнчĕç, вĕсен ĕç тухăçлăхĕ ӳсрĕ. Колхоз руководителĕсем хăйсен ĕçĕн ответлăхне çирĕппĕн туйса колхоз производствине фронта кирлĕ хăвăртлăхсемпе йĕркелесе пыма пуçларĕç. Çапла, ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăри колхозсем тырпулсен 88,1 процентне çапса пухрĕç, государствăна тырă парас плана 61,8 процент тултарчĕç.

Анчах, калас пулать, ялхуçалăхĕнчи ĕçсене тата пысăкрах хăвăртлăхсемпе туса пыма пирĕн пур условисем те пур. Ертсе пыракан работниксенчен хăшпĕрисем фронтри обстановкăна туйса ĕçлеменни çеç 1942 çулти ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлеме чарса тăрать. Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Октябрьски, Первомайски, Чкаловски районсем юлашки кунсенче авăн çапас ĕçе сӳрĕклетрĕç, государствăна тырă парас тĕлĕшпе те графиксене пурнăçласа пымаççĕ.

Пăрачкав районĕнчи колхозсем çак иртнĕ кун хушшинче авăн çапас тĕлĕшпе нимĕнле çитĕнӳ те туман, Çĕмĕрле районĕ пурĕ те 251 гектар çинчи тырра çеç çапса пухнă. Красноармейски район çак иртнĕ пилĕк кун хушшинче 1.381 гектар тыррине çапнă, 7,9 процент ӳсĕм тунă. Анчах уйрăм колхозсене кунта куллен ертсе пымаççĕ. Çавна пула хăшпĕр колхоз руководителĕсем ĕçе япăх туса пыраççĕ. Сурăмхĕрри Карайри «Большевик» колхоз авăн çапма тин çеç тытăннă, çулса пăрахнă пăрçана халĕ те уйран пуçтарса кĕртмен, ĕç дисциплини япăх. Çакăн пек ĕçлекен колхозсем районра татах та пур, вĕсем япăх ĕçленине райçĕрĕç пайĕн руководителĕсем те, МТС политотделĕпе ВКП(б) райкомĕнчи ответлă работниксем те пĕлеççĕ, анчах килĕшсе лараççĕ, çирĕмкунлăхра пур колхозсенче те авăн çапса пĕтерессишĕн, колхозсен государство умĕнчи малтанхи тивĕçне кăтартуллăн пурнăçлассишĕн кĕрешмеççĕ.

Ленин орденлĕ Чăваш республики кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе паха çитĕнӳсем туса тата МТС-сенчи трактористсемпе комбайнерсен паха ĕçне пула Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура малти рете тухрĕ, Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илме кандидата тăма тивĕç илчĕ. Çакă вăл малашнехи кунсенче пирĕн МТС-семпе колхозсем татах та лайăххрах ĕçлеме кирлине кăтартать. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн вĕçлесен çеç эпир Хĕрлĕ ялава хамăр алла илме тивĕçлĕ пулатпăр.

Отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче хаяр çапăçусем пынă вăхăтра ялхуçалăхĕнче пысăк пултарулăхпа ĕçлесе Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулни—пысăк чыс. Пирĕн республикăри хăшпĕр МТС-сенчи трактористсемпе комбайнерсем халĕ те колхозсене авăн çапса парас ĕçре çĕрне-кунне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Ĕçе малашнехи кунсенче татах вăйлатса, МТС-сен колхозсене авăн ĕçне вĕçлеме пулăшмалла. Çакă вăл трактористсемпе комбайнерсем умне, МТС-сен пĕтĕм коллективĕсем умне фронт тăратнă паянхи задача пулса тăрать.

Кашни сложнăй молотилка авăн çапнă çĕрте талăкне 20 сехетрен кая мар ĕçлемелле, МТС трактористсемпе комбайнерĕсен авăн çапнă çĕрти çитменлĕхсене çийĕнчех сирсе ĕçе лайăх йĕркелеме тăрăшмалла, ку тĕлĕшпе колхоз председателĕсемпе алла-аллăн çыхăнса ĕçлемелле.

Колхозсене вырăна тухса конкретно ертсе пырас пулать. Авăн çапас, государствăна тырă парас ĕçсем малта пыракан колхозсенче лайăх пулса пыраççĕ, партипе совет активĕн халĕ юлса пыракан колхозсенче пулмалла. Республикăри кашни колхоз декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтермелле, государствăна тырă парса татмалла. Çак ĕçе чыслăн пурнăçлама пире фронт хушать. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн Хĕрлĕ Çар воинĕсем улăпсем пек кĕрешеççĕ, нимĕç захватчикĕсене çĕршывран хăвалаççĕ, совет ĕççыннисене ирĕке кăлараççĕ.

Государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татар, пирĕн тăван Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене геройла наступление малалла туса пыма пулăшар.

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем Сталинград хули районĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ

Сталинград патне пымалли вырăнсенче тăракан пирĕн войскăсем çак кунсенче нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç наступлени пуçласа янă. Икĕ енчен наступлени тума пуçланă: Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата Сталинградран кăнтăралларахри вырăнсенчен. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре (Серафимович районĕнче) противникăн оборона линине 30 километр тăршшĕ, Сталинградран кăнтăралларахра — 20 километр тăршшĕ татса, пирĕн войскăсем виçĕ кун хушшинче, противник хирĕç тăнине сирсе пырса, малалла 60—70 километр куçнă. Пирĕн войскăсем Дон шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче ларакан КАЛАЧ хулине, КРИВОМУЗГИНСКАЯ (Советск) станцине тата АБГАНЕРОВО станцийĕпе хулине тытса илнĕ. Çапла вара, противникăн Дон шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре тăракан войскисене хатĕрсем турттарса парса тăракан икĕ чугунçула та татнă. Пирĕн войскăсем наступлени туса пырса противникăн 6 пехотнăй тата пĕр танковăй дивизине пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Противникăн 7 пехотнăй, 2 танковăй тата 2 моторизованнăй дивизийĕсене пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче 13 пин çынна тыткăна илнĕ тата 360 оруди тытса илнĕ.

Çавăн пекех тата пулеметсем, минометсем, винтовкăсем автомашинăсем, боеприпассемпе хĕçпăшалсем тата продовольстви хунă складсем нумай тытса илнĕ. Трофейăсене шута илеççĕ.

Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 14 пин вилли ытла выртса юлнă.

Çапăçусенче генерал-лейтенант РОМАНЕНКО юлташăн, генерал-лейтенант ЧИСТЯКОВ юлташăн, генерал-майор ТОЛБУХИН юлташăн, генерал-майор ТРУФАНОВ юлташăн тата генерал-лейтенант БАТОВ юлташăн войскисем хăйсене уйрăмах палăртнă.

Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата кăнтăралларахри вырăнсенчен ăнăçлăн наступлени туса пынă.

Пирĕн войскăсем Дон шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче ларакан **Калач** хулине, **Кривомузгинская** (Советск) станцине тата **Абганерово** станцийĕпе хулине тытса илнĕ.

Иртнĕ эрнере, ноябрĕн 15-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсенче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 60 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 34 самолет пĕтнĕ.

* * *

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырăнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем противникăн пехотипе танкĕсен атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противника атакăланă та, вăл хирĕç тăнине çĕнтерсе, хулари чи çӳлĕ высотана тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн оборонине татнă та ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Пĕр участокра совет чаçĕсем кункаçа нимĕç пехотин икĕ полкне çити аркатса тăкнă, 18 танк, 12 оруди пĕтерсе тăкнă, противникăнне 30 дзотне çити çĕмĕрнĕ. Нумай çынна тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противника вăйлăн тĕреклетнĕ пунктран хĕссе кăларнă. Çав çапăçура тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна çити пĕтерсе тăкнă, 23 пулемет, 14 миномет, боеприпассен 2 складне, инженерла пурлăхăн 2 складне, продовольстви складне тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе пырса, ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Халăх пурăнакан вуншар пункта тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн пехотнăй дивизине аркатса тăкнă тата 5 пин салтакпа офицера яхăн тыткăна илнĕ. Çав дивизин артиллери полкĕ хăйĕн командирĕпе пĕрле пĕтĕм полкĕпех тыткăна парăннă. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенчен 3 танк, 36 оруди, 22 миномет, 100 противотанковăй пăшал, 2 миллион винтовка патронĕ тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски соединени противникăн виçĕ контратакине сирсе ярса, хăйĕн позицийĕсене лайăхлатнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли таран, çунтарса янă 2 танкĕ тата персе çĕмĕрнĕ 3 танкĕ выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем пĕр завода тытса илнĕ. Совет артиллерийĕ тăшман артиллерийĕн 2 батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă, тăшманăн пехотине виçĕ ротăна çити сапаласа янă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пĕр высота районĕнче противник пехотăн пĕр батальона çити вăйĕпе пирĕн позицисене атакăланă. Гитлеровецсен атакине сирсе янă. Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Придухин лейтенантăн подразделенийĕ темиçе окоппа блиндажа нимĕçсенчен тасатнă.

Пирĕн оборонăн малти хĕрри тĕлĕнче противникăн 5 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн 2 поездне ӳпĕнтерсе янă. Икĕ паровоз, 45 вагон тата 4 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Тепĕр отрядри партизансем нимĕç салтакĕсем вырнаçнă казармăна çунтарса янă тата шыв урлă хывнă кĕпере сирпĕнтерсе янă. Пĕр районра нимĕçсем совет партизанĕсен пысăках мар ушкăнне çавăрса илнĕ пулнă. Совет патриочĕсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсемпе çапăçса 92 нимĕç салтакне вĕлернĕ те çав унка татса тухнă.

* * *

Фашистсен тыткăнĕнчен тарса килнĕ совет гражданĕсен пĕр ушкăнĕ Смоленск облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче гитлерла ирсĕрсем мĕнле тискер ĕçсем туни çинчен каласа панă. Нимĕçсен захватчикĕсем Никитинки, Синяки, Покровское тата Маклаково ялĕсене тĕппипех çунтарса янă. Новоселки ялĕнче фашистла ирсĕрсем çуртсемпе уйрăм хуралтăсене çеç мар, мĕнпур çынсене те çунтарса янă. Воробьево, Акатово тата Тверды ялĕсенче нимĕçсем тĕрмери пек йĕрке туса хунă. Вĕсем мĕнпур колхозниксене — арçынсемпе хĕрарăмсене тата стариксемпе ачасене — темиçе çурта вырăнаçтарнă та вĕсене хуралласа тăраççĕ. Кунне икĕ хут — ирхине тата каçхине — вĕсене ятран чĕнсе тĕрĕслесе тухаççĕ. Çавăнта хупнă çынсене хуралласа пырса, ĕçлеме хăвала-хăвала каяççĕ.

* * *

Будапештран килнĕ хыпарсем тăрăх, Гитлер Венгри правительствине Германие продовольстви хальхинчен нумай ытларах тăратма хушнă. Берлин хистенипе Венгрире çитес кунсенче çăкăр памалли нормăна чакараççĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, çăкăр паекне çын пуçне кунне 200 граммран 150 грамм таран чакараççĕ. Çак норма вăл Европăри чи пĕчĕк норма пулса тăрать. Юлашки вăхăтчен çавăн пек нормăна итальянецсем çеç илсе тăнă. Халĕ ĕнтĕ гитлеровецсем итальянецсене çеç мар, венгерецсене те выçă паек вĕçне тăратса хăварнă.

Ноябрĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче малтан кăтартнă еннеллех ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырăнаçнă пайĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем 140 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем хăйсен ĕнер çухатнă позицисене каялла тавăрас тесе икĕ хутчен контратака тунă. Пирĕн боецсем нимĕçсене вăйлăн персе кĕтсе илнĕ, вĕсем противникăн пехотине икĕ ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем çĕрле противникăн икĕ штурмовой батальонне аркатса тăкнă. 6 йывăр оруди—тягачсемпе пĕрлех, 22 противотанковăй оруди, 78 пулемет, 11 миномет, 800 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра нимĕçсем васкаса икĕ батальон пехота тата 25 танк илсе пырса, пирĕн подразделенисене малалла кайма чарма хăтланнă. Якубовский юлташ ертсе пыракан танкистсем тăшманăн 8 танкне персе çĕмĕрнĕ те, противника лӳчĕркĕсе пăрахса, унăн тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Нимĕçсен икĕ батальонĕн пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Вĕсен юлашкийĕсене тыткăна илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăралларахра пирĕн войскăсем çаплах малалла куçса пынă. тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе пынă. Совет чаçĕсем пĕр участокра кăна 700 гитлеровеца вĕлернĕ, тĕрлĕ калибрлă 40 оруди, 70 пулемет, минометсен темиçе батарейине, 400 лаша ытла тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Çапăçусенче пирĕн танкистсем активлăн кĕрешеççĕ. Старши лейтенант Тренькинăн тата кĕçĕн лейтенант Боровикăн танк экипажĕсем малалла ыткăннă та противникăн виçĕ орудине пĕтерсе тăкнă, унтан вĕсем противника хăваласа пырса хăйсен гусеницисемпе 100 гитлеровеца ытла таптаса вĕлернĕ. Старшина Шепелев ертсе пыракан темиçе танкист автоматсем тытса танксенчен сиксе тухнă та 100 румын салтакне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн артиллери тăшманăн укреплениййĕсем çине персе тăнă. Нимĕçсен 7 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă. Противник тылĕнче кĕрешекен разведка отрячĕ нимĕçсен автоколоннине тапăннă. Пирĕн разведчиксем боеприпассем тиенĕ 8 автомашинăна тата 40 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнчи снайперсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр участокра нимĕç пехотин икĕ батальонĕ 10 танк пулăшса пынипе Н-ски чаçа атакăланă та ăна кăшт каялла чакарнă. Унтан пирĕн боецсем хăйсен вăйĕсене урăхла йĕркелесе хăратса контратака тунă та нимĕçсене хăйсен малтанхи рубежĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли ытла выртса юнă. Пирĕннисем 7 пулемет, 10 автомат, винтовкăсем тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем противник çирĕплетнĕ халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 60 станковăй тата ручной пулемет, 4 оруди, минометсем тата 3 радиостанци тытса илнĕ.

* * *

Воронежран кăнтăралларахра итальянецсен пехотин пĕр роти пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕме хăтланнă. Зайцев юлташ ертсе пыракан боецсем пăшалсемпе тата пулеметсемпе персе противникăн ротине сапаласа янă. Итальянцсен вуншар салтакне пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче Н-ски чаçăн разведка тăвакан отрячĕ тăшманăн штаб машинине тытса илнĕ тата унта ларса пынă нимĕç майорне, фельдфебеле, писаре тата шофера тыткăна илнĕ. Машина хуралĕ хирĕç тăнипе ăна пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

* *

Курск облаçĕнчи партизансем ноябрĕн малтанхи вунă кунĕ хушшинче противникăн 6 поездне ӳпĕнтерсе янă. Нимĕç захватчикĕсемпе çапăçса, совет патриочĕсем 800 гитлеровеца çити вĕлернĕ тата 3 танкеткăпа 7 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

ВЦСПС-ра

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ халăх хуçалăхĕн пĕр отраслĕн заказĕсене пурнăçлакан заводсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти октябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Пĕр халăх комиссариачĕн заказĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕ тесе палăртнă завод-смежниксен хисепĕнче пирĕн республикăри Н-ски завод (директорăн заместителĕ Бунин юлташ) пур.

Совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасататпăр

Вырăс халăхĕн тата ССР Союзĕнчи ытти халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле эпир те, чăваш халăхĕн ывăлĕсем, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешетпĕр. Эпир фашистла оккупантсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте çĕршыв умĕнчи хамăрăн тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçласа пыратпăр. Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, унăн никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçнă чухне паттăрлăхпа геройлăх кăтартнăшăн ССР Союзĕн Правительстви сержант Егор Александрович Никитин юлташа—«Хĕрлĕ çăлтăр» орденĕпе, ефрейтор Алексей Васильевич Васильев юлташа—икĕ медальпе наградăларĕ. Ефрейтор-комсомолец Петр Миронов, красноармеецсем Ананий Максимов, Никифор Попов, Михаил Воробьев т. ыт. юлташсем те хăйсен паттăр ĕçĕсемпе палăрса тăраççĕ.

Юратнă çулпуç Сталин юлташ Октябрь уявĕ ячĕпе кăларнă приказра пире, воинсене, çапла хушнă: «Эсир çирĕп те чăтăмлă пулнинчен, сирĕн вăрçăри пултарулăхран тата эсир тăван çĕршыв умĕнчи хăвăрăн тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртме хатĕр тăнинчен нимĕçсен фашистла çарне çĕмĕрсе тăкасси, Совет çĕрне гитлерла захватчиксенчен тасатасси килсе тăрать»,— тенĕ.

Эпир çакна нихăçан та манмăпăр. Çĕнтерӳ тумалли çул пире паллă. Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ çав çула уçăмлăн кăтартса параççĕ. Умра кирек мĕнле йывăрлăхсем тăрсан та, пире питех те хаяр çапăçусем кĕтеççĕ пулин те, эпир нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкатпăрах! Совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасататпăр!

Старши сержант А. КРЫЛОВ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Танксен колоннисене тума

ИШЛЕИ. Явăшри туллимар вăтам шкулти вĕренекенсемпе учительсем танксен «Народный учитель» ятлă колоннине тума укçа пухма тытăнчĕç. П. Сорокин, В. Шоронов, Г. Щербаков, Н. Лукшинов вĕренекенсем çак ĕç валли 28-шар тенкĕ, А. Сорокин, Г. Денисов пионерсем 15—28-шар тенкĕ пачĕç. Учительсем танксен колоннине тума уйăхри ĕç укçин 15 процентĕ чухлĕ пачĕç. Танксен «Народный учитель» ятлă колоннине тума шкулĕпе пурĕ 1.028 тенкĕ укçа пухнă.

В. ИГНАТЬЕВ.

Турттарас ĕçе вăйлатмалла

Чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе малтанхи пекех Йĕпреç леспромхозĕ лайăх ĕçлет. Ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне вăл çак çулăн иккĕмĕш çурринчи задание хатĕрлес енĕпе 107,5 процент, турттарас енĕпе 94,2 процент тултарнă. Ун хыççăн Вăрнар тата Атăлшьенчи леспромхозсем пыраççĕ. Вĕсем 6 уйăхри задание хатĕрлес енĕпе иртттерсе тултарнă, турттарас енĕпе те ĕçе вĕçлесе пыраççĕ.

Анчах чылай леспромхозсемпе вăрман завочĕсем чугунçул валли вутă хатĕрлес ĕçе юлашки вăхăтра сӳрĕклетрĕç. Уйрăмах турттарас ĕçĕн графикĕ пурнăçа начар кĕрсе пырать. Хĕрлĕ Чутайри механизациленĕ вăрман пункчĕ хатĕрлес енĕпе задание вĕçленĕ çинчех турттарас енĕпе ăна 60 процент çеç тултарнă. Апла пулин те вăрман пункчĕн тата районри партипе совет органĕсен руководителĕсем турттарас ĕçе тĕппренех вăйлатас тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ.

Хăшпĕр вăрман завочĕсем тата пур ĕçре те юлса пыраççĕ. Алтышевăрипе Буинскри вăрман завочĕсем, сăмахран, 6 уйăхри заданисене пĕтĕмпе те 60—80 процент çеç тултарнă. Çĕмĕрлери механизациленĕ вăрман пункчĕн ĕç хăвăртлăхĕсем те çителĕксĕр.

Топливо хатĕрлес плана тултарассине ĕç вăйĕ татса парать. Ĕç вăйне — лашасемпе çынсене — малтанхи кунсенчех çителĕклĕ уйăрса панă районсем плана срокчен тата ытлашшипех тултарчĕç. Йĕпреç, Шупашкар тата Улатăр районĕсем халĕ вутта заданирен иртттерсе хатĕрлеççĕ тата турттараççĕ. Калинински район та хăйĕн заданине срокчен вĕçлесе пырать.

Анчах нумай районсем вутă хатĕрлес ĕçе ытти ĕçсем хушшинче манса хăвараççĕ, вăрманта ĕçлемелли çынсемпе лашасене планпа палăртнă чухлĕ уйăрса памаççĕ. Планпа пăхнă ĕç вăйĕнчен республикăра хальхи вăхăтра 30—35 процентĕ кăна вăрманта ĕçлет. Çак ĕç вăйĕ задание вĕçлеччченех ĕçлеменнипе тăтăшах улшăнса тăни те плана тултарас хăвăртлăха чакарать.

Çулталăк вĕçлениччен пĕр уйăх та эрне анчах юлчĕ. Вăхăт нумай мар. Чугунçул валли вутă хатĕрлемелли задание çак срокра мĕнле пулсан та тултармалла. Парти райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен транспорт валли топливо хатĕрлес ĕçпе ытларах интересленмелле, вăрманта ĕçлеме кирлĕ ĕç вăйне çителĕклĕ таран уйăрса памалла.

Леспромхозсемпе вăрман завочĕсенчи работниксен задачи — турттарас ĕçе лайăххрах организацилесе, графика ытлашшипех тултармалла тăвасси пулать. Халĕ юр ӳкрĕ, çуна çулĕ хывăнчĕ. Лашасене туллин ĕçлеттерме лайăх майсем пулса тăчĕç. Ĕçе тĕрĕс организацилесе пултаруллăн ертсе пыни çеç кирлĕ.

Дружинин юлташăн цехĕнче

КУСЛАВККА, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Комбинатри социализмлă ăмăртура Дружинин юлташ ертсе пыракан цех малта пырать. Унăн цехĕ иртнĕ уйăхри производство планне срокчен тата ытлашшипех тултарчĕ, ку уйăхра та ăнăçлăн ĕçлет.

Фронтпа çĕршыва продукци ытларах парас тесе цехри кашни рабочипе работница ăмăртаççĕ. Çак ăмăртура стахановецсем лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Франчук сменинчи столярсем К. Уваров, М. Ильин юлташсем нормăна кулленех 200—250 процент тултараççĕ. Новиков сменинчи Бобров столярпа Калинин клейщикăн ĕç тухăçлăхĕ те çавăнтан кая мар. Стахановец Харинский юлташ вара нормăран 3 хут тухăçлăрах ĕçлет.

Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн рабочисен ĕç тухăçлăхĕ татах та ӳсрĕ. Çулпуç сăмахĕсем çине ответлесе кашни паян ĕнерхинчен тухăçлăрах ĕçлет.

Е. ЦЫГАНОВА,
СССР Верховный Совет депутачĕ.

Производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ

ШАХАСАН. «Сталь» промартельре ĕçлекенсем Сталин юлташăн докладне пысăк интереспа сӳтсе-яврĕç. Вĕсем, Сталин юлташăн доклачĕпе хавхаланса, тата та тухăçлăрах ĕçлеме пулчĕç.

Промартельри рабочисемпе работницăсем илнĕ обязательствăсене кăтартуллăн пурнăçласа пыраççĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехри М. Яковлева, В. Григорьева, Т. Григорьева стахановкăсем кулленхи нормăна 3—4-шар хут иртттерсе тултараççĕ. Вĕсем ноябрь уйăхĕнчи заданисене срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Социализмлă ăмăртса ĕçлесе промартель членĕсем пысăк çитĕнӳ турĕç: октябрь уйăхĕнчи плана вĕсем 208 процент тултарчĕç. Çак кунсенче коллектив ноябрь уйăхĕнчи плана та тултарчĕ, халĕ планран иртттерсе продукци кăларать.

В. ЯКОВЛЕВ.

АВĂН ÇАПСА ПĔТЕРМЕЛЛИ ÇИРĔМКУНСЕНЧЕ

Ĕçлĕ пулăшу

СĔРПУ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче авăн çапас ĕç йĕркеллĕн пулса пырать. Малта пыракан колхозсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçленĕ, государство умĕнчи парăмсене татнă хыççăн халĕ юлса пыракан колхозсене пулăшаççĕ. «Большевик» колхоза авăн çапма çак кунсенче МТС молотилкине куçарса патăмăр тата «Молодая сила» колхоз членĕсене чĕнсе ĕçе тăратрăмăр.

Çак иртнĕ вунă кун хушшинче, ноябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, пирĕн районри колхозсем 2.927 гектар тыррине çапрĕç. Вунăкунхи графикпа 2.380 гектар çапмаллаччĕ. Районри 113 колхозран 35-шĕ авăн çапса пĕтерчĕç, ку ĕçе ыран паянах тата 20 колхоз вĕçлемелле. Район государствăна тырă памалли плана 71 процент пурнăçларĕ.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Натуроплата тыррине парса татрăмăр

ВĂРНАР, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем ноябрĕн 10-мĕшĕпе 20-мĕшĕ хушшинче 2.400 гектар тыррине çапса кĕртрĕç. Задани тăрăх 1.850 гектар тыррине çапса пухмаллаччĕ. Çак вăхăтрах колхозсем государствăна 750 тонна тырă леççе пачĕç. Государствăна обязательнăй йĕркепе памалли тырра районри 44 колхозран 35-шĕ парса татрĕç. МТС панă счетсем тăрăх пур колхозсем те государствăна тырă парса татнă.

С. КОРОТКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерсе пырар

КУКЕÇ, ноябрĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи куна пурĕ 13.831 гектар тыррине çапса пухрĕç. Вăл авăн çапмалли планăн 96,5 процентĕ пулать. Юлашки кунсенче авăн çапас ĕçĕн тухăçлăхĕ татах та ÿсрĕ. График тăрăх кашни кун 60-шар гектар çапмалла пулсан, ноябрĕн 21-мĕшĕнче 91 гектар, ноябрĕн 22-мĕшĕнче 73 гектар тыррине çапнă.

«Ударник», Соляновка ялсоветĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ», Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсем тырра кулленех графикра пăхнинчен ытларах çапаççĕ.

Т. ЛОГИНОВ,

Стахановла ĕçĕн тупăше

ЕТĔРНЕ. Çĕнĕ Етĕрнери «Комсомол» колхозăн членĕсем пуян та культурăллă пурăнаççĕ; пĕр çын пек, пысăк хастарлăхпа ĕçлесе, вĕсем тăван çĕршыва çулран çул пысăк тухăçлă тырпул туса параççĕ. Кăçал колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 18,3 центнер ыраш, 12,3 центнер сĕлĕ пуçтарса кĕртрĕ. Тырăсене пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса кĕртнĕ, паянхи куна авăн çапса пĕтернĕ, государство умĕнчи парăмсене тахçанах парса татнă.

Халĕ колхоз тухăçлă пулнă тырпула валеçме хатĕрленет. Пайланман фондсене пĕтĕмĕшпех çителĕклĕ уйăрса хунă. Чи тутă, таса тырра вăрлăхлăх уйăрса хунă. Колхозниксен кашни ĕçкунĕ çине кăçал 3,75 килограмм тĕш тырă тата икшер тенкĕ укça тивет. Кунсăр пуçне тата ĕçкунĕсем тăрăх утă, сĕлĕ уламĕ валеçĕнет.

И. ЛЬВОВ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн

Колхозсем выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес, унăн продуктивноçне хăпартас тĕлĕшпе кулленех пысăк вăй хурса ĕçлеççĕ. Кăçал пирĕн районри колхозсен майракаллă шултăра выльăхсен йышне 2.400 пуçа çитермелле пулнă, халĕ вĕсен хисепĕ 2.428 пуçа çитрĕ. Район сурăхсемпе сыснасем ĕрчетес енĕпе те плана 100 процент ытларах тултарнă.

Выльăх-чĕрлĕх йышне ÿстерес тĕлĕшпе уйрăмах юлашки вăхăтра ĕçе лайăхлатнă. Кĕске вăхăт хушшинче колхозсем темиçе çĕршер пуç выльăх-чĕрлĕх туяннă. Сăмахран, 1942 çул пуçламĕшĕнче колхозсен пĕтĕмпе 1.603 сысна пулнă пулсан, ку тарихчен вĕсен хисепĕ 1.821 пуçа çитрĕ. Çак вăхăт хушшинче районри колхозсенче сысна фермисем çĕнĕрен 15, сурăх фермисем 12 организациленĕ.

Уйрăм колхозсенче выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстересси те начар мар пырать. «Красноармеец» колхоз кăçал кашни ĕнерен 1.300-шер литр сĕт суса илмелли çулталăкри плана 9 уйăх хушшинчех пурнăçланă. Доярка А. Писарева юлташ хăйне çирĕплетсе панă ĕнесенчен 9 уйăх хушшинче планран иртттерсе 1.940 литр, А. Карягина юлташ—1.670 литр, А. Гогина—1.905 литр, М. Коннова—2.164 литр сĕт суса илнĕ. Стахановла ĕçшĕн вĕсем кашниех ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх натурăпа преми илеççĕ.

Ĕçшĕн хушса тÿлеме тивĕçлĕ стахановец-колхозниксем Улхашри «1-ое мая», «Подборное» тата ытти колхозсенче те пур. Кăмашари «1-ое мая» колхозра сурăх ферминче ĕçлекенсем сурăхсенчен çăм илмелли плана 141,6 процент пурнăçланă.

Чылай колхозсем хĕле лайăх хатĕрленсе кĕреççĕ. Ку ĕçе пирĕн çак çитес кĕске вăхăтрах вĕçлемелле.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз выльăхсем валли хĕл каçмалăх утă-улăм, тымар-çимĕç, силос хатĕрленĕ, выльăх витисене юсанă. Ленин ячĕпе тăракан колхоз нумаях пулмасть 200 пуç сурăх вырнаçтармалăх çĕнĕ вите туса лартрĕ, выльăхсем валли кăçал 400 тонна силос хывса хăварчĕ.

Кашни колхоз кăçал выльăхсем валли кирлĕ чухлĕ апат хатĕрлесе, ăна фермăсене актсем тăрăх çирĕплетсе парать. Силос хывмалли плана кăçал эпир 116,8 процент тултарнă.

Анчах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, выльăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем çук тесен йăнăш пулнă пулĕччĕ. Тунă ĕçсене, паллах, çителĕклĕ теме çук. Уйрăм колхозсем халĕ те фермăсене комплектласа çитермен, выльăхсем валли ăшă витесем туман. Хăшпĕр çĕрте çамрăк выльăхсене пăхассине япăх организациленĕ пирки, тăкаксем чылай пулчĕç. Уйрăмах пăрусемпе путексем чылай вилнĕ.

Çак çитменлĕхсене пĕтерессипирĕн умра тăракан задачăсенчен пĕри. 1943 çулта кашни çамрăк выльăха тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтермелле, çамрăк выльăхсене кĕтсе илме халех хатĕрленмелле. Выльăх-чĕрлĕхĕн йышне малалла татах вăйлăн ÿстерме, унăн продуктивноçне хăпартса пыма пирĕн условисем пур. Фермăсенче ĕçлекен колхозниксен ĕç дисциплинине çирĕплетмелле, ĕçĕн çирĕп йĕркине тумалла. Ĕçе социализмлă ăмăртупа туса пымалла, кашни выльăхшăн, унăн пысăк продуктивноçĕшĕн кĕрешмелле.

И. КОТЛЕЕВ,
ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ.

Пирĕн землянксем

Отделени командирĕ

Хĕрлĕ Çар ретне киличчен Иван Митрофанович Карзаков юлташ Çĕнĕ Ахпÿртре (Чкаловски район) ытти çынсенчен нимĕнпе те палăрса тăман. Çавăнпа килти пурнăç çинчен сăмах тапратсан, вăл яланах: «Колхозра ĕçленĕ. Пушар дружинин начальникĕ пулнă. Çавна май колхозăн тата колхозниксен пурлăхне инкек-синкекрен сыхланă», тесе çеç ответлет.

Фронт Карзаков юлташăн пурнăçне улăштарчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл — старши сержант, тăван çĕршыва сыхлас, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре пархатарлă ĕç тăвать.

Фронтăн пĕр участокне кĕме питех те йывăр пулнă, унта йĕнерленĕ лашасем çинче çеç боеприпассем илсе пыма май килнĕ. Командовани çак задачăна пурнăçа кĕртессине Карзаков çине хунă.

Вăл хăйĕн отделенийĕпе шурлăхлă вырăн тăрăх, тăшман артиллерирен вăйлăн персе тăнине пăхмасăр, кăтартнă вăхăтра хамăр боецсене боеприпассем çитерсе панă. Темиçе лашапа илсе пынă темиçе ещĕк снаряд пирĕн малти подразделенин çапăçури вырăнне тактика тĕлĕшĕнчен нумай лайăхлатнă. Карзаков юлташăн отделенийĕ çак боевой задачăна ăнăçлăн пурнăçлани пирĕн боецсене çĕнтерÿ тума пулăшнă.

— Йывăрччĕ, отделенири хăшпĕр боецсем тăшман снарячĕсем кĕрлесе çурăлнинчен, пулемет шатăртатса тăнинчен шикленме те пăхрĕç. Эпĕ вĕсене боевой задачăна пурнăçлама хам хавхалантарса пытăм, — тет Карзаков.

Карзаков юлташ боевой задачăсене яланах çакăн пек пурнăçлать. Пĕррехинче унăн отделенийĕ боевой задачăна пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра, тăшман авиацийĕ бомба пăрахнипе пĕр çуртра пушар тухнă. Çав пушар отделенин материальнăй пурлăхне пĕтерсе тăкма пултарнă. Карзаков юлташ кунта та хăюлăх кăтартнă, пурлăха тата хаклă груза çăлса хăварнă кăна мар, ăна срокчен фронтăн пĕр ответлă участокне леççе панă.

Фронтра 9 уйăх хушши ытла пулса сахал мар благодарность илчĕ чăваш халăхĕн ывăлĕ старши сержант Иван Карзаков.

Старши политрук Р. ШАШКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Хăрушă кĕтес умĕнче

Атакăпа хĕрÿленсе кайнă краснофлотецсем блиндажа çĕмĕрттерсе çитсе кĕчĕç.

— Кам кунта! Тух хăвăрт! — кăшкăрчĕ Шляхов кĕнеттӗменех.

Блиндажра никам та курăнмасть: стенисем ишĕлсе аннă, амбразура торфпа хупланса ларнă, алăкĕ çĕмрĕк. Анчах сисĕмлĕх пур çĕрте те питĕ кирлĕ.

— Тăрăр! Ан васкăр.

Паша Рябинин майран сакнă автоматне тепĕр хут сылтăм аллипе çирĕппĕн ярса тытрĕ те, сулахай аллине хыçалалла тăсса, юлташĕсене малалла утма чарчĕ. Унтан землянкăн тĕттĕм кĕтесинелле вăл пĕччен утса кайрĕ.

Чул стена çумĕнчи щит çинче висĕ çыннăн кĕлеткийĕсем çакăнса тăраççĕ. Виççĕшĕн те аллисем икĕ еннелле хăлаçланнă, пуçĕсем кăкăрĕсем çине усăннă. Янах шăмми айĕнче штыкпа çурса пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр тунă суран тăрăх юн юхса аннă. Татăла-татăла кайнă ÿт хушшисенчен шурă шăмăсем курăнаççĕ. Пичĕсене пăхмалла мар мăшкăлласа çурса пĕтернĕ.

Краснофлотецсем пĕрин хыççан тепри блиндажа кĕрсе тухаççĕ. Кĕриччен алăк умĕнче каскисене хываççĕ. Хăрушă, чуна ыраттаракан кĕтес умнелле темиçе утăм тăваççĕ те пăртак тăссе тăрсан, пĕр калаçмасăр каллех тухаççĕ. Куçĕсем вĕсен шывланнă, тутисем чăмăртаннă.

Пулеметчик-гутар Галиев та, ытти краснофлотецсем пекех, блиндажран тухсан, сулахай енне пырса, каскăна кăкăр çумĕнче тытса тăчĕ. Каскăна кун пек тытса тăни ăна вăйсăрланнă урисем çинче тăма вăйхал кĕртнĕн туйăнчĕ. Галиев ăнсăртран сăмах хушрĕ:

— Боцман! А, Степан Ильич! Авă мĕн тунă вĕсем, чуниллисем...

Паллама питĕ йывăр пулин те, Галиев виççĕшĕнчен пĕрне палласа илнĕ.

Нимĕçсем асаплантарса вĕлернĕ чăваш ачипе — Гавриловпа Галиев фронтра паллашнă. Гаврилов Галиева пĕр çапăçура вилĕмрен хăтарнă: суранланнă Галиева вăл окруженирен çăлса кăларнă.

— Боцман! — тепĕр хут сăмах хушрĕ Галиев çул тăрăх утса пынă чух, — вĕсем пирĕн боцмăна çапла...

Иккĕмĕш хут Галиева рота командирĕ патĕнче тĕл пултăмăр. Тепĕр кунне вăл фронтăн малти линине, боевой охранение кайрĕ

— Чĕрĕ çын кĕлетки çине касса çурса тунă çăлтăр манăн куç умне ĕмĕрлĕхех тăрса юлчĕ... Фрицсем пирĕн çĕр çинче утса çÿреме пăрахиччен мĕн пĕте смена ан ярăр. Эпĕ вĕсене хурласа пĕрерĕн-пĕрерĕнех вĕлеретĕп,—терĕ вăл çул çине ăсатма тухнă Шляхова.

Тепĕр эрнерен мана Шляхов Галиевран çыру илнине каласа пачĕ. Юлашки çапăçура вăл хăйĕн юратнă пулемечĕпе 40 гитлеровецa ытла вĕлернĕ пулнă. Унчухне хăй те аманнă. Халĕ госпитальре выртать. Суранĕ йывăр мар иккен.

«Сывалатăп. Каллех урнă фрицсене вĕлерме пыратăп», — тенĕ вăл çырура.

Мих. АЙГИР.
ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хĕрлĕ Çара хăй ирĕкĕпе кайнă комсомолец сержант **Дмитрий Капитов** (Канаш хулинчен). Вăл пĕр çапăçура хăй пĕччен 11 нимĕçе тыткăна илнĕ, вĕсене пурне те штаба илсе çитернĕ.

Капитов юлташа Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Ют çĕршывсенче

Бивербрук тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, лорд Бивербрук хăйĕн Лондонра ноябрĕн 10-мĕшĕнче тухса калана сăмахĕнче çапла каланă: «Европăри уйхирсенче противникпа хирĕç-хирĕç тăрса çапăççан çеç эпир çак вăрçăра çĕнтерме пултаратпăр, пирĕн иккĕмĕш фронта çавăнта уçмалла та», тенĕ. Çурçĕр Африкăри фронт çинчен Бивербрук çапла каланă: «Çав фронт вăл пирĕншĕн пуçламĕш позици çеç пулса тăрать. Халĕ, пирĕн алăра сикмелли трамплин пур чухне, пирĕн питĕ сисĕнтермелле пыра-пыра çапмалла», тенĕ.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ВОЙСКИСЕМ БИЗЕРТА ПАТНЕ ПЫМАЛЛИ ВЫРĂНСЕНЧЕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: ноябрĕн 21-мĕшĕнче каçхине союзниксен войскисем Германин Туниспа Бизерта патне пымалли вырăнсене хÿтĕлекен çирĕплетнĕ позицийĕсене атакăланă. Англипе Америкăн тĕп вăйĕсем противникăн вăйĕсемпе тĕл пулса çапăçма тытăннă та ĕнтĕ.

Германи чăçĕсем броневиксемпе тата танксемпе Туниспа Бизерта хулисенчен хĕвеланăçнелле куçаççĕ.

Çавăн пекех тата тĕнĕл держависен войскисем Габес сывăхĕнчи (Тунисран 200 миля кăнтăраракра) сыран çине анса юлма хăтланнине Франци войскисен полкĕ сирсе пăрахни çинчен пĕлтереççĕ.

Нимĕçсене хирĕç англичансемпе тата американецсемпе пĕрле тăрса кĕрешекен французсен чăсĕ противника Тунисран 10 миля айккарахра атакăланă. Англипе Франци тата Америка салтакĕсем питех те кирлĕ рубежа тытса илнĕ.

ИНТЕРНАЦИОНАЛЬНАЙ БРИГАДА БОЕЦĔСЕМ ПУЛНА ÇЫНСЕНЕ ИРĔКЕ КĂЛАРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Испанире фашистла интервенци вăхăтĕнче кĕрешнĕ интернациональнăй бригадăн боецĕсене 900 çынна яхăн ирĕке кăларнă. Çулталăк каярах вĕсене Виширен Çурçĕр Алжирти Джельфари концентрациллĕ лагере куçарнă пулнă.

АНГЛИ ПИЧЕЧĔ ДАРЛАН ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçат Дарланпа çыхăнса ĕçлени çинче чарăнса тăрса çапла çырать: Дарлан, вăхăта сая ямасăр, Çурçĕр Африкăра хăйĕн позицине тĕреклетсе пырать. Вăл Алжирта информаци бюровĕ (хăйĕн пропагандистла органĕ пекки пулса тăраканскерне) тата «Франци Африки» ятлă телеграф агентстви туни çинчен пĕлтернĕ. Çурçĕр Африкăри радио ĕнтĕ темле хутăш информаци пама пуçланă: вăл, пĕр енчен, тĕнĕл держависем панă информацие, тепĕр енчен — союзниксем панă информацие пама тытăннă. Çав радио де Голль заявленийĕ пирки мĕнле позици йышăннине асăрхама тивĕçлĕ. Çав заявленин чи кирлĕ пайне — кĕрешекен французсем Вишин Çурçĕр Африкăри влаçĕ çине мĕнле пăхни çинчен каланă пайне — кăларса пăрахнă. Рузвельт Дарланпа вăхăтлăха çеç килĕшни çинчен каланине Çурçĕр Африкăри радио пĕрех те паман.

АНГЛИН ЛИВИРИ НАСТУПЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен командованийĕн коммюникинче çапла каланă: ноябрĕн 21-мĕшĕнче Англи войскисен малти чăçĕсем противникпа Аджедабирен инçех мар вырăнта тĕл пулнă. Баркăра противникăн салтакĕсене тыткăна илнĕ. Бенгазире Англи çарĕн салтакĕсене, хăйсен вăхăтĕнче нимĕçсем тыткăна илнĕскерсене, ирĕке кăларнă.

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче Англи самолечĕсем Триполине атакăланă, кунта тăшманăн суднисем çине тата портри сооруженисем çине бомбăсем пăрахнă.

Ноябрĕн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче çĕрле Англин вăтам бомбардировщикĕсем Бизертăри аэродрома атакăланă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мĕнпур Киренаика халĕ ĕнтĕ англичансен аллинче тăрать. Эль-Агейла патĕнче вăйлă çапăçусем пулаççĕ пулмалла. Унта нимĕçсем çирĕпленсе ларма ĕмĕтленеççĕ тесе шутлаççĕ.

Ливи фронтĕнчен килекен хыпарсем тăрăх, союзниксен çăмăл бронетанковăй чăçĕсем противникăн бронемашинисемпе тĕл пулнă, анчах та вăйлă çапăçусемех пулман. Тăшманăн войскисене малалла йĕрлесе пыраççĕ

ФРАНЦИН ЭКВАТОР ТĂРĂХĔНЧИ АФРИКИН ГЕНЕРАЛ-ГУБЕРНАТОРĔ ТАТА КАТРУ ГЕНЕРАЛ ДЕ ГОЛЛЬ ПАТНЕ ЯНĂ ТЕЛЕГРАММĂСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Францин экватор тăрăхĕнчи Африкин генерал губернаторĕ Эбуэ де Голль генерал патне телеграмма янă. Çав телеграммăра вăл Францин экватор тăрăхĕнчи Африкинче пурăнакан пĕтĕм халăх наци комитетне тата де Голле хăйне пĕр пăркаланмасăр пăхăнса тăни çинчен пĕлтерет.

Кĕрешекен Францин Сирири войскисен командующийĕ Катру генерал та де Голль патне телеграмма янă. Çав телеграммăра вăл Левантăри французсем тата хăй командир пулса ертсе пыракан войскăсем де Голле пĕр пăркаланмасăр пăхăнса тăни çинчен пĕлтерет. Пирĕн çĕршыв тÿссе ирттерекен çак йывăр, анчах та пысăк шанчăк паракан сехетсенче,—тесе çырать Катру,—пирĕн эсир тăшманăн ури умне хума килĕшмен ялав тавра нихăçанхинчен те хытăрах пĕтĕçмелле. Противникпа нимĕнле те килĕшмелле мар, — тет.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ТУРИНА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Турина хаяррăн пырса тапăннă. Çакă вăл вăрçă пуçланнăранпа Италие чи вăйлăн атакăлани пулнă. Пĕтĕм хулана пушарсен тĕтĕмĕ сырса илнĕ.

Ноябрĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла çыранри авиацин самолечĕсем Голланди çыранĕсем патĕнче противник суднисен караванне атакăланă. Торпедăсем ярса висĕ суднăна сиенленĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ТУРИНА ТАПĂННИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 21-мĕшĕнче Турина пырса тапăннă чухне Англи бомбардировщикĕсем пĕр сехетрен те каярах вăхăт хушшинче фугаснăй бомбăсем 100 тоннăна яхăн тата вут хыптаракан бомбăсем 50 тоннăна яхăн пăрахнă. Вăтамран илсен, кашни минутăра 1.800 килограмм туртакан пĕрер фугаснăй бомба тата кашни секундăра 13,5 килограмм туртакан вут хыптармалли пĕрер бомба пăрахнă.

ИТАЛИН ÇАК ВĂРÇĂРИ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: авторитетлă çынсем каланă тăрăх, çак вăрçăра 1940 çултан пуçласа, Италин чĕрĕ вăйĕ 45 дивизи таран пĕтнĕ, çав шутран 27 дивизи—чернорубашечниксем. Çак шута Италин Африкăрипе Грецири фронтсенче çапса аркатнă, тыткăна лекнĕ тата саплайми пысăк çухатусем тÿснĕ дивизийĕсем кĕреççĕ.

ПОРТУГАЛИПЕ ИСПАНИЯ АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЗАЯВЛЕНИЙĔ ÇИНЕ ПАНĂ ОТВЕТСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительстви Португалипе Испани правительствисене хăй Çурçĕр Африкăри операцисем тĕлĕшпе мĕнле позици тытса тăни çинчен пĕлтернĕ. Халĕ çав икĕ правительствăран та ответсем илнĕ. Португалин министерсен совечĕн председателĕ хăйĕн Англин премьер-министрĕ патне çырнă çырăвĕнче çапла калать: Англия Португалие шантарса каланине Португали правительстви савăнсах шута илет, тенĕ.

Испани правительстви хăйĕн ответне Англин Мадридри посолне панă. Çав ответра çапла каланă: Англи правительстви шантарса каланине шута илнĕ, Англи правительствин чаплăн тунă декларацине тав тусах йышăннă, тенĕ.

Ĕçкунĕсен минимумне кашни колхозникĕн тултармалла

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксемпе колхозницăсем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе илмелли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» йышăннă постановлени колхозсен ĕçне вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек лайăхлатса çирĕплетме, колхозсен обществăллă ĕçĕн тухăçлăхне ÿстерме вăйлăн пулăшрĕ. Колхозниксем вăрçă вăхăтĕнче ялхуçалăхĕнчи ĕçсене уйрăмах пысăк пахалăхпа тата вăхăтра туса пыма кирлине, ĕçе кашни колхозникпе колхозницăн активлăн хутшăнма кирлине лайăх ăнланчĕç. Пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе продуктивноçне татах та ÿстерессишĕн Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вĕсем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ирттерсе тултарма обязательство илчĕç.

Партипе правительствăн постановленийĕ тăрăх, ĕçлеме пултаракан кашни колхозникĕн çулталăк хушшинче колхоз производствинче 120 ĕçкунĕ, кашни подростокăн 50 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе тумалла. Çак шутран кашни колхозникĕн июнĕн 15-мĕшĕччен 30 ĕçкунĕ, июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшĕччен 30 ĕçкунĕ, августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 15-мĕшĕччен 40 ĕçкунĕ ĕçлесе тумалла, ытти ĕçкунĕсене ялхуçалăх çулĕ вĕçлениччен ĕçлесе тумалла

Малта пыракан тÿрĕ кăмăллă колхозниксем партипе правительствăн постановленине ырласа йышăнчĕç, ялхуçалăхĕнчи ĕçсем пуçланнă хыççăнах, вĕсем кулленех тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕç.

Партипе советăн тата комсомолăн вырăнти организацийĕсем тата МТС-сен политотделĕсенче ĕçлекен работниксем колхозсенче агитациллĕ-ăнлантаруллă ĕçе анлăн туса пынă май колхозниксен ĕç дисциплини çирĕпленчĕ, колхозăн обществăллă ĕçне колхозниксен пĕтĕм масси активлăн хутшăнса ĕçлеме пуçларĕ. Обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен малтанхи срокĕнчех нумай колхозниксем ĕçкунĕсене минимумран ытларах турĕç. Анчах çапах та малтанхи срокри ĕçкунĕсен минимумне сăлтавсăр пурнăçламан колхозниксем республикăра 2,9 процент тупăнчĕç. Иккĕмĕш срокра—июнĕн 15-мĕшĕпе августăн 15-мĕшĕ хушшинче—колхозниксен ĕç тухăçлăхĕ нумай ÿсрĕ. Колхоз производствине колхозниксем тата ытларах хутшăнса ĕçлерĕç. Çапла, ĕçкунĕсен минимумне тултарса пыман колхозниксен хисепĕ республикăра 1,3 процент çеç юлчĕ.

Уборка вăхăтĕнче тата халĕ, ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçленĕ çĕрте, колхозниксен ĕçлес хастарлăхĕ татах та ÿсрĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем колхоз производствинче ывăнма пĕлмесĕр тимлĕн ĕçлеççĕ. Обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне тултарассишĕн пыракан кĕрешÿ çĕнĕ пусăма çĕкленчĕ. Кувакино районĕнчи колхозниксен 93 проценчĕ, Ишлей районĕнчи колхозниксен 49 проценчĕ, Чкаловски районри колхозниксен 48 проценчĕ ĕçкунĕсен виççĕмĕш срокри минимумне ирттерсе тултарчĕç.

Тăвай районĕнчи «Трудовой путь» колхозра 68 çулхи ватă колхозница Анастасия Степанова кăçал 250 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă, унăн икĕ ывăлĕ фронтра, фашистсене хирĕç çапăçаççĕ. Первомайски районри «Красное Именево» колхоз членĕ, тăватă ача амăшĕ Анна Яковлева августăн 15-мĕшĕ тĕлне 160 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă. Тырă вырнă вăхăтра вăл кулленех ĕç нормине 200—250 процент тултарса пынă.

Тухăçлă пулнă тырпула, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсене хăвăрт, лайăх пухса кĕртсе ялхуçалăхĕнчи ĕçсене вĕçлессишĕн тÿрĕ кăмăллă колхозниксем вăя шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура вĕсем малти ретре пыраççĕ, хăйсен паха ĕçĕпе колхозниксен пĕтĕм массине тухăçлăрах ĕçлеме çĕклеççĕ. Кулленхи ĕç нормисене 200—300 процент тултарса ĕçлекен колхозник-стахановецсем колхозсен чи авторитетлă çыннисем пулса тăраççĕ.

Анчах та обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне кашни колхозникпе колхозница пултарасси вăл хăй тĕллĕн пулса пымасть. Ĕçе чĕрерĕн парăнса туса пыракан, фронтпа çĕршыва пулăшассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлекен колхозниксемпе пĕрле пирĕн тÿрĕ кăмăлпа ĕçлеме юратман е ĕçрен пачах та пăрăнса çÿрекен çынсем те пур-ха. Çавăн пек харампырсемпе сăмахпа çеç мар, тата закон тăрăх айăпласа та кĕрешмелле тата кунта учет ĕçне çирĕп йĕркелесе пыни те кирлĕ. Первомайски районри Молотов ячĕпе тăракан колхозра ĕçлеме пултаракан 226 колхозникрен 151 колхозник августăн 15-мĕшĕ тĕлне ĕçкунĕсен минимумне тултарман. Çак районрах «Осоавиахим» колхозра ĕçлеме пултаракан колхозниксен йышĕнчен çурри ытла çав минимума пурнăçламан.

Хăшпĕр колхозсен правленийĕсем тата райçĕрĕç пайĕсем колхозниксем мĕншĕн ĕçлеме тухманнипе интересленмеççĕ, кашни колхозник ĕçкунĕсен минимумне мĕнле пурнăçласа пынине пăхмаççĕ, учет ĕçĕ япăхса кайнипе килĕшсе лараççĕ. Елчĕк районĕнчи «Гигант» колхозра, колхоз председателĕ Пузанов айăпĕпе, колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене висĕ уйăх хушши шута илмесĕр тăнă. Элĕк районĕнчи Горький ячĕпе тăракан колхозра колхозниксен висĕ уйăхри ĕçкунĕсене паянхи куна çитсе те çырса паман

Çакăн пек çитменлĕхсене халех пĕтермелле, колхозниксен ĕçкунĕсен минимумне пурнăçлама мобилизацилемелле. Çавăнпа пĕрлех колхоз руководителĕсемпе бригадирсен кашни колхозник ĕçкунĕсен минимумне тултарма пулăшмалла, ку тĕлĕшпе кая юлса пыракан колхозниксене вăхăтра асăрхатармалла, ачаллă колхозницăсене ĕçлеме услови туса памалла. Учет ĕçне çирĕп йĕркелесе пырса, лайăх ĕçлекен колхозниксене тăтăшах паллă туса тăмалла. Ĕçрен юриех пăрăнса çÿрекен, ĕçлеме юратман кахалсемпе харампырсене колхозниксен умне кăларса питлемелле.

Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене пĕтĕмĕшпех вĕçлес вăхăт çывхарса килет. Фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра халĕ кашни колхозник ĕçе кулленех активлăн хутшăнмалла. Социализмлă ăмăрту халĕ нихăçанхинчен те анлăн сарăлса каймалла. Кашни колхозникĕн вăя шеллемесĕр тимлĕн ĕçленипе фронта çĕнтерÿ тума вăйлă пулăшмалла.

Н. КОНДАКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Коммунальной бане требуются на постоянную работу банщицы, шофер на газогенераторную машину, сторож, дворник.

Предоставляется общежитие и столовая.
АДМИНИСТРАЦИЯ.

Водосвет производит набор девушек для ускоренного обучения по специальностям машинистов, пом. машинистов, смазчиков и электриков. На время обучения выплачивается зарплата ученика, а по сдаче испытания выплачивается полностью зарплата соответственно полученной квалификации. Имеется столовая.

Обращаться: Водосвет, отдел кадров.

Требуются для работы в аппарате и химфармлаборатории:
Главный бухгалтер, бухгалтера, фасовщики и мойщицы.
Обращаться в часы занятий по адресу: г. Чебоксары, улица Аптечная, 13, Чувашское отделение Главаптекоуправления. Телефон № 6 — 22.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1112 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф б. 58 84 п